1878-
-1961

125 çул

Н.В.НИКОЛЬСКИЙ

ИРТНĔ ĔМĔР ПУÇЛАМĂШĔНЧЕХ УНИВЕРСИТЕТ УÇĂСШĂН ÇУННĂ

НУМАЯХ пулмасть Чаваш Республикин Патшалах Тĕп архивĕнче çакăн пек документ вуларам:

«РСФСР Чаваш автономи облаçĕн ревкомĕн 1920 çулхи çурла уйахĕн 13-мĕшĕнче иртнĕ ларавĕн 18-мĕш протоколĕ.

Итленĕ: а/ Шупашкар хулинче Хусан университечĕн филиал уйрамĕсене уçасси çинчен.

Йышанна: а/ пурнаçра кирлĕрен Шупашкар хулинче патшалах университетне уçма хистенине йышанас; б/çак пысак пĕлтерĕшлĕ ĕçе кĕске вăхатрах пурнаçлама май çукран халĕ Шупашкар хулинче Хусан университечĕн филиал уйрамĕсене уçнипех çырлахас; в/ облаçри халах вĕрентĕвĕн пайне Шупашкарта Хусан университечĕн филиал уйрамĕсене уçассин ыйтавĕсемпе Чрезвычайла Комисси туса хума хушас».

Н.В.Никольский университет уçас пирки ĕçлени çинчен В.Д.Димитриев профессор «Николай Васильевич Никольский: «очерк жизни и деятельности» кĕнекере тата ЧПУ доценчĕ, филологи аслăлахĕсен кандидачĕ К.К. Петров «Ульяновец» хаçатан 1996 çулхи 1-мĕш номерĕнче çырна.

1920 çулхи çулла Н.В.Никольский Шупашкара килсен университет уçас тĕллевпе хастар ĕçлеме тытаннă, пилĕк факультет /естествалла, обществалла наукасен, социалла пурнаçпа истори, математика, медицина факультечĕсем/ йĕркелесшĕн пулна.

Николай Васильевичсар пуçне Хусантан Н.И. Ашмарин. Н.Ф.Кабанов, С.Е.Малов, Б.Е. Будде, В.В.Перцов, Б.Н.Вишневский тата ытти паллă доцентсемпе профессорсен те Шупашкара яланлăхах куçса килмелле пулна, медицина факультетне студентсем те йышáнма пуçланă.

Никольский факультетсем валли декансем, профессорсем тата преподавательсем пулма çынсене тимлĕн суйлана. Кашни профессорпа, доцентпа хай тĕл пулса калаçса таталнă. Вал университет никĕсĕ çинче малашне консерватори уçма, чаваш филологийĕпе культура факультетне йĕркелеме ĕмĕтленнĕ, журналистсем хатĕрлесси çинчен шухашланă. Куратпăр ĕнтĕ, унăн программи хальхи Чаваш патшалах университечĕн программипе пĕр килнĕ.

Çӳлерех асаннă Чаваш автономи ооласĕн ревкомĕн протоколĕпе тата Н.В.Никольский шухашĕпе «çӳлтисем» килĕшмен. Ун чухне Чаваш автономи облаçĕн пуçлăхĕсенче 5-6 класс пĕтернĕ çынсем çеç ĕçленĕ. Вĕсем ăна пур чухне те анланман, тен, ятарласах анланма тарăшман.

Николай Васильевич çине тăнипе çак ыйтава Чăваш автономи облаçĕн ревкомĕнче иккĕмĕш хут пахса тухнă. Лару 1920 çулхи çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче иртнĕ. Унăн 21-мĕш протоколĕнче çапла çырна:

«Итленĕ: Д.С.Эльменĕн «Чăваш автономи облаçне туса хунин пĕлтерĕшĕ» темапа тунă докладне

йышăннă: Чăваш ĕç халăхĕн пысăк йышне экономикари чуралахран, культурăра юлса пырассинчен хăтарас тата вĕсенче класс ăнланăвне аталантарас тĕллевпе, çавăн пекех Чаваш автономи облаçне туса хуни çинчен хыпарлакан куна палартна май революци комитечĕ çапла йышăнать:

1. Хĕрлĕ лапамра Хресчен çурчĕ лартас.

2. «1-мĕш май саденче» Чăваш автономи облаçĕ йĕркеленнине халалласа палак лартас.

3. Шупашкар хулинче, Чăваш облаçĕн центрĕнче, патшалах университечĕ пуçарса ярас».

«Пурнăçлани çинчен палартни» йĕркере çапла çырса хуна: «Çурт никĕсне ревком хунă».

Ку саванаçла ларăва ревком хăйĕн членĕсемсĕр пуçне уессемпе вуласссенчен те пуçлахсене чĕннĕ. Н.В.Никольский 1920 çулта Шупашкарта патшалăх университечĕ уçассишĕн мĕнле вай хунине, хаш-пĕр çын ку ыйтăва мĕнле путлантарса лартнине нихăçан та манас çук.

Никольскийпе эпĕ тăван ялăмра – Купăрляра – часчасах тĕл пулна. Çаван пекех 1956-1961 çулсенче Хусанта та. Вал вăхăтра эпĕ Мари Республикинче ĕçленĕ май киле отпуска кайнă е каялла таврăннă чухне çула май ун патне кĕнĕ. Манран анне, Евдокия Меркурьевна, ялан ыйтатчĕ: «Николай мучу патне кĕтĕн-и? Вал мĕнле пурăнать?» Ăна салам калама хушатчĕ тата ун валли хуран кукăлĕ е пан улми, кишĕр кукалĕ, килте тунă шăрттан парса яратчĕ.

1960 çулта эпĕ икĕ уйăх Хусанти сурăх çамне малтанласа йĕркелекен фабрикара вĕрентĕм. Çав вăхăтра Николай мучипе кашни кун тенĕ пекех тĕл пулнă. Эпĕ ют çын патĕнче хватерте пуранатгăм. Хаш чухне тĕттĕмленсе ларсан транспорт çӳремест тесе Николай Васильевич мана хайĕн хваттерĕнчех /тăвăр пулсан та/ çывăрма хăваратчĕ.

Пĕррехинче вăл манран çапла ыйтрĕ: «Мĕнле вĕрентĕн? Учительсем камсем?»

Каласа кăтартрăм. Купарляри пуçламăш шкулта пĕрремĕш класра Л.М.Михайлов /Купăрляран, 2 класс пĕтернĕскер/, иккĕмĕшĕнче А.Т.Трофимов /Элĕк районĕнчи Шĕмшешрен/ вĕрентрĕç. 3-мĕш класра – И.И.Ларьков /Йӳçкассинчен, 10 класс пĕтернĕскер/. 1942-1943 çулсенче ана тăташах пулас салтаксене вĕрентме илсе каятчĕç. Çав вăхăтра пирĕн пата урăх классенчи учительницăсем К.А. Андреева, М.Г.Золотова пыратчĕç. Вĕсем хăйсен класне кайсан мана староста тесе хушса хăваратчĕç. 4-мĕш класра И.С.Илюшин /Купăрляран, 10 класс пĕтернĕскер/ вĕрентрĕ. 5-мĕш класра /Исетерккари çичĕ класлă шкула çӳрене чухне/ математикăпа Н.А.Алексеев /Вaçкассинчен, 10 класс пĕтернĕскер/, биологипе С.М.Михайлов /Купарляран, 7 класс пĕтернĕскер/ пĕлӳ паратчĕç. Пĕтĕмлетсе каласан, 1-7 классенче педагог профессине алла илнĕ учительсем питĕ сахал пулна. 8-10 классенче /Йӳçкассинчи ватам шкулта/ вĕрентекенсем: Г.Г.Григорьев, Е.Г.Григорьев, Х.И.Кудрявцева, О.Д.Данилова, И.С.Степанов, А.Н.Николаева, К.М.Матвеев, И.Е. Евдокимов, Ф.П.Бушуев, Г.П.Уфрин т.ыт.те. Шкул директорĕ Г.А.Александров институт пĕтермен, хăйне тискер тытнă, ачасем унран чĕтресе хараса ларна. Вĕреннĕшĕн пĕр сиктермесĕр укçа пуçтарна. Кам тӳрех тӳлеймен – киле хаваласа янă. Вĕсен шутĕнче мана та темиçе хутчен çавăн пек шăпа лекнĕччĕ /эпĕ 8-мĕш класчен пĕр çулталăк çурă сысна ферминче ĕçленĕ пулин те колхоз пĕр тенкĕ те паман/. Учительсенчен кашни мĕнле вĕренӳ заведенийĕ пĕтерни çинчен калас та килмест. 10-мĕш класс пĕтерес умĕн шкул директорĕ çапла каларĕ: «Н.Пантелеймонов ватам шкул лайăх пĕтернĕ май аттестатпа пĕрле ылтăн медаль илме пултарать».

Экзаменсем тытса пĕтерсен манан вырăс чĕлхипе çырнă ĕçе республикăн Çут ĕç министерствине тăратрĕç. Унта пĕр йăнăш тупнă та мана медаль памарĕç.

Кун пирки Н.В.Никольский пĕтĕмлетсе çапла каларĕ: «Питĕ шел. 1920 çулта Шупашкарта университет уçнă пулсан санăн учительсем те ятарлă пĕлӳллĕ специалистсем пулатчĕç».

Мĕн тăван: пирĕн телей çакăн пек пулнă. Сталин «атте» «пулăшнипе» /вал пуçлахра 30 çул ытла ларнă пулсан та/ Шупашкарта университет усайман. Кун пирки Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров Чаваш хĕрарамĕсен X съездĕнче каланине илсе кăтартас килет: «...было в стране в течение 70 лет как целенаправленная политика спаивания населения. Потому что было легче управлять пьяным населением!.. Разве мы хорошо учимся в целом по республике? Чувашская Республика вплоть до конца 1996 года занимала 80-е место по образовательному уровню в России...» Çав вахăтрах хашĕ-пĕри Сталина мухтама тăрăшать.

Университет уçассишĕн мĕнле хыпаннине аса илнĕ чух Н.В.Никольскин мăшăр куçĕнчен шапар-шăпăр куççуль тумлани те сахал мар пулнă. «Ун чухне Шупашкарта университет уçна пулсан эсир та çавăнта вĕренмелли ачасемччĕ», – тетчĕ вăл.

Тĕлĕнмелле, тепĕр 47 çултан кăна Николай Васильевичăн палăртнă ĕçĕ, çутă ĕмĕчĕ пурнаçа кĕме пултарчĕ. Ахăртнех, ун чухне, 1920 çулта, В.И.Ленин та университет уçма пулашнă пулĕччĕ. Вăл чавашсемшĕн тăрашнине те пĕлетпĕр. Никольский Ленин патне те çитме пултарна. Ленин Никольские лайăх пĕлнĕ, унăн пилĕк кĕнекине хайĕн Кремльти библиотекинче тытнă, усă курнă.

Çав вăхăтрах Н.Никольский Хусан хулинче виçĕ аслă шкул: Хĕвел тухăç консерваторийĕ, Хусан университетĕнче историпе, филологипе специалистсем хатĕрлес тесе чавашсене, çармассене, удмуртсене, макшăсене, ирçесене, комисене, пермяксене, кряженсене вĕрентме ятарлă факультет тата Çурçĕр-хĕвел тухăç археологипе этнографи институчĕ уçна.

Н.В.Никольский Хусанти университетра пĕр çул доцент, 13 çул /1929 çулччен/ профессор пулса ĕçленĕ, çав вахăтрах Çурçĕр-хĕвел тухăç археологи институчĕн профессорĕ, 1920-1922 çулсенче Хусан консерваторийĕн директорĕ тата профессорĕ. 1922-1931 çулсенче Хĕвел тухăç педагогика институчĕн профессорĕ тата чăваш уйрăмĕн пуçлăхĕ пулса нумай ыра ĕç тунă. Ватам Атал тăрахĕнчи халахсем, уйрамах Чăваш çĕршывĕ валли пысак квалификациллĕ кадрсем хатĕрлеме пĕтĕм пултарулăхне пана, сывлăхне те хĕрхенмен. Йĕркеллĕ çывăрман каçсем мĕн чухлĕ пулна-ши? 1931-1940 çулсенче вал Мордвари наука-тĕпчев институчĕ ыйтнипе «Документы и материалы по истории Мордовской АССР» сборник хатĕрленĕ. 1940-1950 çулсенче, пенсие кайнă пулсан та, Мари педагогика институтĕнче профессор, Мари наука-тĕпчев институтĕнче наукăн асла сотруднике пулса ĕçленĕ. Вал виçĕ томлă «Мари халăх историйĕ» çырна. 1947 çулта ана иккĕмĕш хут истори наукисен докторĕн ученăй степеньне панă /пĕрремĕш хут 1916 çултах/.

1917 çулхи революци хыççăн Н.В.Никольский общество ĕçне хастар хутшăннă. Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсен обществине пуçарса яна. Ку общество хура халаха çутга калараc, таван чĕлхепе кĕнекесем пичетлес тĕлĕшпе ĕçленĕ.

1917 çулхи çу уйăхĕнче Николай Васильевича Хусан кĕпĕрнин Земство управин председателĕн çумне тата халăха вĕрентес ĕç пайĕн пуçлахне суйланă. Çав вăхăтра вăл уессенче учительсем хатĕрлекен семинарисем тата шкулсем уçас тĕлĕшпе нумай вăй хунă. Н.Никольский тăрашнипе вак халăхсем валли чылай гимнази, учительсен семинарийĕ, училище, шкул уçнă, учебниксем кăларнă.

Анчах мана 1996 çулта «Советская Чувашия» хаçатра Чаваш патшалăх университечĕн профессорĕ Т.Сергеев тата Çĕнĕ Шупашкарти В.Сазанов çырнисем тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç. Вĕсенчен çапла ыйтас килет: мордва, ирçе, мари, чăваш тата ытти халăхсен ачисене аслă пĕлӳ паракан çынсен хушшинче Н.Никольский чухлĕ пысăк ĕçсем тавакан вăл вахатра тата урăх кам пулна-ши?

Чаваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров 2002 çулхи çурла уйахĕн 21-мĕшĕнче «Н.В.Никольский çуралнаранпа 125 çул çитни çинчен» Указ каларчĕ. Çак Указпа килĕшӳллĕн Чаваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателе Н.Ю. Партасова мероприятисен планне çирĕплетрĕ. Чаваш халахĕ ана хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ.

Президент тата Правительство Чаваш патшалăх университетне чăваш, мари, коми, удмурт, мордва, ирçе, тутар, çавăн пекех вырăс тата ытти халăхсен аслă, ватам, пуçламаш пĕлӳ парас ĕçне аталантарса пынă, самахпа мар, ĕçпе палăрнă Николай Васильевич Никольский ятне парасса шанас килет. Çак шухăша «Хыпар» хаçатан тĕп редакторĕ А.П.Леонтьев, Красноармейскипе Йĕпреç районĕсенчи К.Шачкинпа Г.Кузнецов уççăн çырчĕç, ăсчахсемпе ЧР Журналистсен союзĕн членĕсем те ырласа йышăнчĕç. Шанни харама каймĕ тетĕп.

Николай ПАНТЕЛЕЙМОНОВ.